„Канаш“ хаҫат ҫумӗнҭе тухат̆.

# КАПКӐН

9-мӗш №

Майшӑн, 1927 ҫ. 3-мӗш ҫул тухат̆.

## Тутӑхнӑ йапала.

Ҭӑваш интелекенҭӗсен ҭӗлхи тутӑхсах пырат̆.



**Ҭӑваш интелекенҭӗ:** Ман ҭӑвашла калаҫакан ҭӗлхе тутӑхнӑ теҫҫӗ. Аҫта куьта тутӑхви? Шатрасем ҫеҫ тӳхнӑҫке.

# Ђăвашран çуралнă вырăссем.

(Стутентсен пурнăçĕнђен).

Пирĕн йалти Иашук ĕлĕк Ваçтăрккăна (Астрахань) кайса ултă çул пурăнђĕ те, киле таварăнсан ђăвашла калаçма манса кайнăђђĕ. Çул çинђе ĕшенсе килнĕ хыççăн унăн пăтă çийес килнĕ те, амăшне:

— Мамă, кашшă вариӳ пар-ха, тесе калаӳ, тет.

Амăшĕ вырăсла пĕлменскер:

— Ђăвашла каласам, ывлăм, мĕн, апат пĕçерсе памаллаи сана, тесе ыйтаӳ, тет.

— Ђăвашла сапыл епĕ, мамă, çуллый кашшă пекки, тесе лараӳ, тет Иашук. Амăшĕ Йашука ăнланаймасăр, пăтă вырăнне ђăмăрла паранкă пĕçерсе парсан, Иашук тепĕр куннех ђăвашла калаçма пуçларĕ тет амăшпе. Анђах пал хушшинђе пĕр çулталăк ђăвашла пĕлеймесĕр çӳрерĕ. Ђăвашла вырăс, тесе кулађђĕç йалта Иашукран.

Тепĕр ђăваш тата икĕ çул çурă салтакра пурăнса таварăнсан, çапла калаӳ теђђĕç:

— Тва котă шесӳ лет томă не пыл, том мойа, трупа не мой... никак не пĕлеш...

Пулнă çав ĕлĕк, çав тĕрлĕ шутнĕксем.

Нумай пулмасӳ епĕ пĕр ђăваш стутентпа паллашрăм. Темшĕн çав ађапа тăруках тус пулса карăмăр. Пĕре çав ађа мансăрах театтăрта тутасене хĕретнĕ хĕрсемпе паллашнă та, мана хăйпе пĕрле тепĕр вырсарни кун çав хĕрсем патне хăнана кайма ђĕнет. Кайас умĕн мана çапла тăнлантарђĕ:— Снайăш, есĕ унта ђăвашла халап ан кăлар, епĕ вĕсене Ђулхула кĕпĕрнинђи вырăс, тенĕ.

Иурĕ, терĕм. Мĕншĕн пулăшас мар йулташа çавăн пек «сăваплă» ĕçре.

Карăмăр. Хĕрсем аван ђăнах та. Калаçатпăр, кулатпăр, пире ђей ĕçтерђĕç.

Кĕç ђипер ларнă çĕртенех, манăн йулташăн тухасси килнĕ те, ман паталла пĕкĕрлсе хуллен ђăвашла ыйтаӳ: — Ăçташи кăсен..... Епĕ ђăвашла калаçма йураманнине асăрхамасăр хыттăнах:—Ара ыйт хăйсенђен, мĕн именсе тăран, тесе хутăм. Çиййĕнђен пĕр сăваплăрах сăмах ђăвашла шаплаттарса хутăм.

Йулташ çине пăхап, хĕрсем çине пăхап... Пĕр хĕрĕн пиђĕсем хĕп-хĕрлĕ пулса кайнă.

Ак тамаша, мĕн пулђĕ вара, тесе шутлатăп.

— Есĕр ултавçăсем-иç, мĕншĕн хăвăр ђăвашне пытараттăр-ха пирĕн умра, терĕ çав хĕр çиленнĕ куçĕсемпе пирĕн çине пăхса.

Мĕн тăвас тен, пĕлтермелле пулђĕ ђăвашне. Анђах çакăн хыççăн хĕрсем пирĕнпе калаçми пулђĕç, хамăрăн ђĕлхе-çăвар та çыхланма пуçларĕ. Киле ăсатса йанă ђух, хĕрсем пире урăх килме те ђĕнмерĕç.

Паллашнă хĕрсенђен пĕри ђăваш хушшинђе ӳснĕ вырăс хĕрĕ пулнă мĕн. Çапла пĕтрĕ пирĕн паллашу. Ку нимех те мар-ха. Ку йаалти çынна айăкран тĕксех каймасӳ, тĕксен тĕкет хамăра.

Тепĕр ђăваш стутентђĕ опшђешиттинђе хăй пӳлĕмĕнђен тухса тарнă. Епĕ унтан:—есĕ мĕншĕн çав пӳлĕмре пурăнмастăн çак, тесе ыйтрăм. Вăл мана:

— Ты ешђо не понимайĕш в ђом тут тело, снайĕш, вăл кумнăтра хамăр ђăвашсем пурăнаççĕ, вĕсем пĕр майах ђăвашла лапăртатаççĕ. Вĕсемпе пурăнсан нихăçан та вĕренес çук, мĕн пĕлнине те манса кайăп... Воопшђе натоел мана ђăваш йасыкĕ терĕ.

Ђăваш хушшине пырсан «ђăваш мойа, йасык не мойа, темĕç-ши вĕсем.

П. В-в.

## Асанне хулара çутта тухни.

Самарта епĕр пĕр ђаплă нумĕрте ђарăнтăмăр. Тумтир хывса хумалли те тĕкĕр алăклă çав. Иртсе çӳренитуни пĕтĕмпех курăнаӳ. Нумĕре кĕнĕ ђух асанне çав тĕкĕрте хăй сăнне курнă та, çапла калаӳ:

— Е-е, кунта урăх çынсем те пурнаççĕ иккен, тет.

— Ăçта?.. Çук-çке, асанне. Тĕкĕр виттĕр хуна куратăн пуђ есĕ?

— Хе-е-е, йĕксĕк... Ђăнах та-çке.

Тин çутта тухрăмиç, тет.

ОКЛЫ ПАРКИШ.

## Айаларах антар.

Тавар хакĕ хут çинҫе çес йӳнелнĕ пек курăнса тăрать.
Хаçатсенҫен.




Правлени ҫленĕ. Çав хака пĕр 10 вершук] антарса çакха, йе саççемех урайне ӳкер... Ийунĕн 1-мĕшĕ инçех мар вĕт... Ревиçи килсен кăтартмаллăх жултăр хăть.

## Вĕçи-хĕрисĕр калаçу.

Мĕнле йĕрке пулҫĕ ку? Копператтива каллех ĕçме йуратакан çынсене суйланă...

— Пухура пулни ху?

— Пулнă.

— Каларăна ĕçме йуратакан çынсене суйлама йурамасть тесе?

— Каламарăм.

— Ыйтусем патăни?

— Ыйтусемпе аппаланмарăм.

— Ал тăратрăни?

— Тăратрăм.

— Ху суйланăçке. Мĕн кăшкăрашатăн тата?

— Мĕнле кăшкăрмалла мар, ĕçме йуратакансем копператтива ленкрĕç!

— Есĕ пухура ху та пулнăçке.

— Пулнă.

— Ыйхăласа лартăни?

— Ыйхăларăм.

— Нимĕн те ҫĕнмерĕни?

— Ҫĕнмерĕм.

— Ыттисем те ҫĕнмерĕçи?

— Ыттисем те ҫĕнмерĕç.

— Апла пулсан халĕ суйлав иртсе кайнă хыççăн ма кăшкăрашса çӳреттĕр?

— Мĕнле кăшкăрмалла мар: копператтива ĕçме йуратакансене суйланă.

— Пухура есĕ те пулнă вĕт?

(Малалла та çапла майлах пырать).

# „Халкерунтиилпетçум“

(Ӳăваш ӳĕлхи пирки пуçа кĕнĕ шухăшсем).

Пурнăç улшăннă май
ӳĕлхе те улшăнса пырать, теççĕ
хăшĕ-пĕрисем.
Тĕрĕсех пулмалла
ку шухăшсем.
Акă: «ӳаплă ӳăваш—пăлхар»
ӳĕлхине илер,
вăл мĕнле улшăнса пынине
курар.
Акă: нумай та пулмасть,
Мĕкĕтепе Петĕр
пасарта-и, мĕнте-и,
пĕрпĕринпе курăшсан,
çапла пĕрпĕринпе калаçаӳӳĕç:
—Сывă-и, Мĕкĕте...
—Сывă-ха, Петĕр. Ĕçсем
мĕнле, тетӳĕç.
Халĕ апла мар, урăхла
сăмахлаççĕ.
— Ей, Микитка, сторов штоли?
сторов, сторов! тесе
тĕп ӳăваш ӳĕкхипе
ӳĕлхелеççĕ...
Ӳĕлхе улшăнать...
Ĕлĕкрех: «çавăн пек çуртсем»
çине
вырăслах çыраӳӳĕç.
Халĕ: «Тŭн аракка» тесе
çыраççĕ.
— «Тŭн аракка»?!
— Мĕн «тŭн»?
Тĕп ӳăваш ӳĕлхипех
çырнă ăна.
«Тŭн» тени—тŭнсе кай,
тени пулать.
«Аракка» тени—ерех,
тенипе кулать.
Пĕтĕмпе «Хос-çпирт»
пулать.
Акă мĕн вăл «Тŭн аракка«.

. . . . . . . . . . . . . . .

Ӳăнахах ӳăваш ӳĕлхи
улшăнса пырать,
ӳĕлхе асамçисем калани
тĕрĕсех пулать.
Акă тата:
— Ĕçхалçумĕ.
— илпетлĕ пусăм.
— пулăшу ĕскĕлем
— Пайташ.
— Ĕç керунтийĕ.
— Хал керунтийĕ *)..

*) Тимухха Хветĕрĕ çырнă ӳăваш ӳĕлхии краматтикĕнӳе тĕл пулакан сăмахсем.

Пĕрре пĕр утăм малалла тухса,
Тепре çĕр утăм кайалла ӳакса.
Çаплах, шăвать ех
малалла.
ӳĕлхе...
— Ĕç керунтийĕ!—
— Ку—Тимухха пиӳӳейĕн
ӳĕлхийĕ!
Ку—ӳаваш ӳĕлхийĕн
„илпетлĕ пусăмĕ“!

. . . . . . . . . . . . . . .

Çапла, ӳăвашăн ӳĕлхийĕ
Улшăннăçем улшăнса пырать.
Кунсерен вăл çĕнелсе пырать.
Ĕнер:—сывă-и, Мĕкĕте...
Пайан:--Сторов-ли, Микита...
Вырăсла--«Хос-çпирт»,
ӳăвашла«--Тŭн аракка».
Вырăсла—«причастие»,
ӳăвашла—пайташ.
Ан хăра, Пайраш, *),
Ӳăваш ӳĕлхи утатех
малалла...
Акă нумай та вăхăт иртмĕ,
Çĕнĕ ӳăваш ӳĕлхипе калаçма
пуçлăпăр.
Вара:
Тусăм, ăçта-ха, лешĕ,
лармалли.
тейес вырăнне:
Хал керунтийĕ,
Ей, ĕç керунтийĕ,
Ӳлайу Есхĕл.
Илпетлĕ Ĕçхĕлçум...
Ӳасрах ĕскĕрт...
Керунти! Керунти!
Еçхĕлçум!
Вĕçне çитрĕ!..
Ĕскĕрт! Ĕскĕрт!
тесе

. . . . . . . . . . . . . . .

Çĕнĕ
«Халкерунтиилпетçум»
ӳĕлхипе
ӳĕлхелеме пуçлăпăр...
Вара...
Вара тин
пирĕн
ӳĕлхе
Иут сăмахсенӳен тасалĕ.

ЛАШМАН.

*) Хаçатсенӳе тĕл пулакан автăр.

# Ђĕвĕлтў, ђĕвĕлтў ђăваш ђĕлхи.

Пайан вулĕçтăвком туллийех халăх. Унта йалканаш претçетаттĕлĕсем ернере пĕрре пулса иртекен пухăва пухăннă. Вулĕçтăвком претçетаттĕлĕ аллирине тапăртатса токлат тăваť. Каламан сăмах та хăвармарĕ. Йуртсан-йуртсан утмалла, теççĕ. Çавăн пекех претçетаттĕлĕн ђĕлхи ђăвашла сăмахсене вырăнăн-вырăнăн вырăсла та мар, ђăвашла та мар, лаплаттара лаплаттара хураť. Хăшпĕр сăмахне халăх ăнланса та йулаймасť. Леш çаплах çаптараť.

— Вăт пирĕн, тăваришђи, во ђто вы то ни стало, ђăваш ђĕлхине реалисатсилес пулаť тăрăшмалла. Пес етово, пирĕн ђăваш халăхĕ никокта та малалла кайаймасť. Тђа етово сире пурне те присывайу поротса всех. И пайанхи сопранине претлакайу приђаť относçиттĕлнă çавăншăн постановлени йышăнма.

— Йăшăнас, йăшăнас!

— Поетăму, снађђăт, ырантан пусçласа все отношени путĕм писсаť ђăвашла.

Тĕрлĕ ĕçсем тăрăх, тĕрлĕ постановленисем йышăнђĕç. Хађ ĕнтĕ ђăвашла çыратпăр малашне терĕç те, тухса утрĕç килсене.

Виçĕ-тăватă кун иртрĕ. Претçетаттĕл шăратаť çеç хађхи ђăваш ђĕлхине:

— Пур çелйалканашсоветсене те всем.

На основанни уисполкомран хут килнĕ тăрăх еттим отношени сире пурне претлакаť тăватăп çеменашăн нуштатсă тăвакан краштансен именной çпискине претставит тума с укасанием к нему миçе пăт, каккуй çемена нушнă, потом мĕнле тырă кирлĕ. Пес етово çемена валеçме не восмошнă. Етă вы хăвăр та пĕлетĕр. Скорей претставит тума тăрăшăр.

Претçетаттел ВИК-а ПАСАРОВ.

Потоштите, товаришђи, немкошкă манса оставил. Вы тоше хăвăр та çписокне ђăвашла писаť тăвăр. Претставит тăвăр с нароđным.

ПАСАРОВ.

Та, кроме пусне сирĕн йала патайăт не пошшĕ, 100 пăтран кайа мар. Потвотăсене те прикотовĕт туса хурăр.

ПАСАРОВ.

Реалисатси тенине, тирпейлĕх решимĕ пекех икĕ майлă та ăнланма пулаť. Пĕр йенђен—пĕтерсе хурас; тепĕр йенђен—... çак Пасаров йулташ та икĕшне те пĕрлех çыраť. Çивĕђ, маттур! Пур претçетаттĕлсем те çакăн пек ĕçлеме тытăнсан, ђăваш ђĕлхи тахçанах вырăна кĕрсе лармалла. Вырăнтан нихçан та тухас çук та çав. Анђах хăшĕ пĕрисем вырăнтан кăларса пурнăçа кĕртме тăрăшаççĕ.

* * *

Ђĕвĕлтў, ђĕвĕлтў, ђĕвĕлтў.
Ємпў, ĕмпў, ĕмпў.
Ђепђем, ђепђем, ђепђем
Калама та киђем.
Пасарăв, маттур
Вĕт, мур!
Маттурĕнђен çитнĕ.
Анђах тĕп ђĕлхи çĕтнĕ!
Пыђђăк, пыђђăк, пыђђăк!
. . . . . . . . . . Ç. ШĂПЂĂК.

# Çын улшăнни.



— Иван Ваççилђђă! Мĕнле улшăнса кайнă есĕ çак çуркуннеренпе? Палламалла та мар.

— Паллаймарăн. Епĕ Иван Ваççилђђă мар, Крикори Петровђă.

— Ха! Йату та улшăннă иккен. Хм! Тĕлĕнмелле!

# Таптасран сыхланатăп.

Тăваш Çĕрес кăмиссарнаҫĕн спетсиалисĕсем çураки кампанине иртерме тыр акма пуçласан тин кайрĕç.

Майăн 6 мĕшĕ.



**Çĕрĕç ăсти:** Мĕн тăван, товариш?...

**Хресҫен.** Хитре шăтса тухнă калҫана тĕрлĕ выҫăх-ҫĕрлĕхсем кĕрсе таптасран ана пуçне купалас терĕм.

## Кĕске йумахсем.

1. Йумах йарăп, туппине уйăхран калăп. (Сирĕн йалти пўрократ).

2. Вăтăр икĕ хут тĕрĕ тĕрлем, пĕр çын сўтсех пырĕ. (Уҫрештенийе панă сайавлени).

3. Ни кăвар мар, ни шăрпăк мар, ни кўкĕрт мар, ни çулу мар, а ҫĕртет. (Ревиçи).

4. Хутлă-хутлă хутаçлă. Хутаçа кĕрĕп те хутсем айĕнҫе кĕске ĕмĕрĕм пĕтиҫҫенех выртăп. (Портфелпе хут).

5. Уҫрештенире кам хуçа. (Хут).

6. Çĕр çинҫе пурăнаť,—çўлелле пăхмаť, ним ыратмаť—йăнăшса çўрет. (Хуйхăллă сăвăсем çыракан поет).

7. Маҫҫа çине пăхмасăр ĕç пулмаť. (Отҫот çырнă ҫухне ҫыхвăрсене маҫҫаран илни).

8. Майра инке тăвалла лайăх кайаť, анаттала ҫăхăмлаť. (Тавар хакĕ).

9. Пуртăсăр, сăвайсăр кĕпер хывма пулăп. (Происвотственнăй план).

И.

# „Христос ҫӗрӗлнӗ“.

**Темиан Петнӑй сӑвви.**

Иппат паҫӑшка
Тытнӑ, тет, укҫа.
Ара, унтан пит тӗлӗнмелли ҫук:
Кӗл туса тупнӑ пуп!
Ҫапах та ак, ҫынсем турра веҫ мансассӑн,
Пуйан арҫисене уҫма пуҫласассӑн,
Пуп хӑраса кайнӑ:
— «Уҫаҫҫӗ вӗт, усалсем,— уҫҫи те ҫухалнӑ».
Хӑй ырлӑхне аванрах пытарас тесе,
Пуп, сӗм тӗттӗм ҫӗрле,
Укҫи арҫине леҫсе
Хӑварнӑ вара
Алттара.
Арҫи ҫине ҫырса хурать хитрелетсе:
— «Ку арҫа, тет,—Христос ӳҫӗпеле».
Анҫах ҫан ҫапакан
(Ҫейе мӗн, ҫӗр ҫӑтман!)
Пӗтӗм пуп укҫине хӑйне илсе пуҫтарсан,
Хушса ҫырнӑ вӑл ҫапла: «Ҫук кунта турӑ ӳҫӗ:
Христос ҫӗрӗлнӗ», — тенӗ.

* * *

Пономар шулӗк пулнӑ, ну килӗшӗп кунпа.
Шулӗк шулӗке лартнӑшӑн кам-ха виноват?
Анҫах еп ҫакӑнтан пит хӑратӑп: пуп Иппат
Ан ҫакӑнтӑр хуйхӑпа.

---

# ПИССАТТӖЛСЕМ.

Сӑра хупахӗнҫе вӗсем пӗр-пӗринпе тӗл пулҫӗҫ. Иккӗш те пӗр сӗтел ҫине ларнӑ та, калаҫса лараҫҫӗ.

— Ҫапла!—терӗ паҫтто тӑхӑннӑ ҫынни вӑрӑмӑн сывласа.—Ҫаваш хушшинҫе писсаттӗлсене йуратсах каймаҫҫӗ.

— Есӗ те писсаттӗл-и?—терӗ иккӗмӗш пасар тӑллинҫен тунӑ сӑкман тӑхӑннӑскер.

— Писсаттӗл пулмасӑр. Револютси пуҫланнӑранпа ултӑ кӗнеке ҫыртӑм.

— Пурне те пиҫетлерӗҫи? Халӗ, вӗт, пур ҫырнӑ йапллasене пиҫетлесе кӑлармаҫҫӗ.

Ан калаҫ! Пурне те пиҫетлерӗҫ.

Сӑкманли пукан ҫине сӗвенерех ларҫӗ те:

— Пит лайӑх кӑларса пыҫӗҫ. терӗ. —Лайӑх хут ҫине ҫапрӗҫ, илемлӗ саспаллисемпе, хуплушкаллӑ.

— Сӑвӑсеми?

— Ҫук. Сӑвӑсем мӑр. Прозӑ.

— Ну, мӗнле? Криттӗксем нимӗн те шарлимарӗҫи вара?..

Ҫаваш хушшинҫисем нимех те шарламарӗҫ те... ӗҫӗ унта марха. Никам та ман кӗнекесене вуламасть. Йал ҫыннисем мар, хам та вуламастӑп. Ҫыратӑп ҫыратӑп, та, пиҫетлеме параҫҫӗ. Пиҫетрен тухсан унта мӗн ҫырнине хам та манса кайатӑп.

— Мӗнле сан хушамату? Тен епӗ вуланӑ пуҫ есӗ ҫырнӑ кӗнекесене.

— Ҫук, вулас ҫук есӗ. Епӗ... отҫотсем, происвотствӗннӑй плансем ҫыратӑп. 100-шер—200-шер страниtsӑ пиҫетлесе кӑлараҫҫӗ... Никам та, никам та вуламасть. Ак кӑҫалхи 1927-мӗш ҫулхи май уйахӗн пӗрӗмӗшӗнҫе манӑн пы-ысӑк кӗнеке ҫапӑнса тухать.

— Ҫавашла-и?

— Ҫавашла мар, вырӑсла. Кӗнеки майӗпе йаҫӗ те унӑн вӑрӑм: «**Производственный план по сельскому и лесному хозяйству Чувашской республики на 1926—27 год**». Пиҫетлемех 500 тенкӗ ытла ӳкенӗ (конорарсене шутламасӑр). Никам та вулас ҫук ӑна. Киҫем!

Ҫышкипе куҫҫулӗсене шӑлса илҫӗ те пит вӑрӑмӑн сывласа илҫӗ.

— Халӗ никам та, нимӗн те вуламасть.

— Ҫук, апла ан кала, терӗ сӑкманли.—Манне вулаҫҫӗ.

— Есӗ «Капкӑн» ваҫҫи ҫыратӑни мӗн?

— Ҫук.

— Мӗнле йапаласем ҫыратӑн апла есӗ?

— Прошшенисем ҫыратӑп. Сутйесем, ҫлетӑваттӗлсем епӗ ҫырнӑ кашни сӑмахах тӗпҫесе сӑнаса пыраҫҫӗ.

Кӗтмен ҫӗртен паллашса илнӗ икӗ писсаттӗл кӑпӑклӑ сӑра стаканӗсене пӗр-пӗрин патне илсе пырса шаклаттарҫӗҫ те, кашни харпӑрхӑй сывлӑхӗшӗн ӗҫсе йаҫӗ. ҪАВАХ.

# Уй куҫлӑ, вӑрман хӑлхаллӑ.



## Хĕртет.

— Хĕртет. Йалти ҫынсен куҫĕсенҫен вут-хĕм тухаҫ.

— Кам хĕртет?

— Хака хĕртет. Ваҫлей-Касси йалĕнҫи (Кĕҫкей вул.) Кирилле Ҫтаппанĕ лавкка уҫнӑ. Таварсем наҫар. Ниҫта ҫук хака хĕртет. Правасӑрах ҫӑнӑхпа, шӑршлӑ какайпа сутӑ тӑваҫ.

— Хинакĕнтсем ӑҫта?

— Суккӑр ҫырмине ларнӑ та, анкеттӑсем тултарса лараҫҫĕ.

## Ҫухалнӑ.

— Шыва путнӑ, шыва путнӑ! Ҫӑлӑрах?

— Мĕн? Прахут?

— 700 тенкĕ ҫухалнӑ, те ҫурхи шыв айне пулнӑ, те... 2-мĕш Хурамалти коопператтив йулташлӑхĕн опороҫĕ 80 тенкĕрен кайа мар курӑнаҫҫĕ, халĕ йулашки кунсенҫе кĕнеке витĕр ун опороҫĕ 100 тенкĕ ҫеҫ курӑнаҫ.

— Микроскоппа (трупа витĕр) пӑхсан тупӑнмĕ-ши?

— Куҫлӑхлӑ ревисорсем ҫеҫ тупма пултараҫҫĕ ӑна.

## Халер амӑшĕ.

— Тарӑр ҫасрах кунтан Ҫӑваш респуплĕкĕнҫен. Ҫулла халер пулаҫ.

— Ай-уй! Пĕтрĕмĕрех. Мĕнле халер?

— Халер пулмасӑр: Шурҫа вулӑсĕнҫи Пики-кассинҫе пĕр усламҫӑ Меҫникков ҫĕрĕк пулӑсем сутаҫ. Шупашкартан пиҫкине 5-шер тенкĕ парса илет те, килте кĕренккине 15 пуса сутаҫ. Пуллине сыснасем те ҫимеҫҫĕ, ҫынсем ҫисен ҫирлеҫҫĕ, тет.

— Мĕнле ӑруран пулнӑ вӑл Меҫникков?

— Ҫĕррисене вилĕм паракан ӑруран.

ИВ. М-И.

## Ҫӑваш... патши!?.

«Суйлавсем умĕн Шӑмат вулӗҫтӑвкомӗн претҫетаттӗлӗпе итти ҫлеӗсем вӑйлӑ ӗҫкӗ туса, ҫапла сӑмахсем шӑрантарнӑ.

— Кем являемся мы в настоящее время? Собственно говоря, мы являемся Ҫӑваш патши-и-и!.. Скоро начнется перевыбор—друг друга надо поддерживать», тет ҫутӑ пайне пӑхса тӑраканĕ.

— Ты предоставляй мне доклад по культчасти, а я буду делать отчет три часа—это будет являться комиссаром просвещении-и-и... Хаҫхи уҫитлĕсем каккой уҫитлĕсем.,. аҫисене вĕрентимаҫҫĕ! Епĕ вĕсене ҫылай пӑҫартарӑм та, йĕркеллĕ ĕҫ пулмарĕ,—тет вӑлах претҫетаттĕлне.

— Ох, яблочко—на тарелочке,
Ах дивчина—симпатична...

тесе, йара панӑ». тесе ҫыраҫ Шӑматри йалкор Х. В.

Патшасӑр 10 ҫул пурӑнса иртертĕмĕр, унӑн йахĕ те пĕтнĕ тенĕҫҫĕ ĕнтĕ!.. Ҫук, апла мар иккен! Патшасем Шӑматрах пурнаҫҫĕ иккен! Хаҫ сывӑи вӑл ҫӑваш патшисем?.. Тӳсеймесĕр епĕр те ҫапла йара парар:

«Ех патша самакон ӑшĕнҫе
Ах ӑссӑр—тухса вĕҫ ВĔК-рен!».

## Пыл йухаҫ.

— Ҫӗпӗрте пыл шывсем тӑрӑх йухса пыраҫ, сахӑр пӗлӗтрен ҫӑмӑр пек ҫуса тӑраҫ, теҫҫӗ. Ҫӑнахши вӑл?

— Ҫӑн пулмасӑр. Анҫах пуриншӗн те мар вӑл. Красноярск округӗнҫи Тӑкӑр (Мурта районӗ) йалсовет претҫетаттелӗ патӗнҫе пӗр вырӑс йумӑҫӗ пурӑнна. Ҫав йумӑҫ патне пылсем, ҫусем, ҫӑмартасем шывпа йухса мар, утса пырсах аллине тытӑнаҫҫӗ, тет.

— Мӗншӗн йалсовет претҫетаттелӗ ӑна хӑй патӗнҫен хӑваламан-ха?

— Ма хӑвалас? Хӑваламасан йумӑҫ уҫинҫен йухса тухакан пылсем претҫетаттел аллине ленкеҫҫӗ-ҫке.

## Вилӗмрен ҫӗрӗлнӗ.

— Илтни есӗр: ҫынсем вилӗмрен ҫӗрӗлме пуҫларӗҫ!

— Ӑҫта?

— Мӗн ӑҫти? Кӗҫкей вулӑсӗнҫи Шупашкар-ҫӗн йалӗнҫе, вырӑсла каласан Аскарин опҫӗствинҫе. Унта суйлав прави йенҫен вилнӗ ҫын Микула ҫӗрӗлсе тӑрса Совета тивӗҫлӗ краштӑнсен шутне кӗнӗ: халӑха пӗр ҫетвӗрт ерех панӑ та, халӑх ӑна ҫын шутне кӗртнӗ. Халӗ ӗнтӗ суйлав прави йенҫен, ӗлӗк вилнӗскер, халӗ ҫӗрӗлсе тӑҫӗ, вилӗмӗпе ҫӗнтерҫӗ.

— Халӗ ҫӗрӗлнӗскерӗн ун сасси те лайӑхланнӑ пуҫ.

— Лайӑх Иерихон трупи пекех.

## Тӑлӑха йулнӑ.

— Йулашки вӑхӑтра тӑлӑх-туратсем нумайланма пуҫларӗҫ.

— Нумай, пит те нумай. Ав Ҫӗрпӳри наҫалнӗк милитси кӑпинеҫӗ те тӑлӑха тӑрса йулнӑ. Кӑпинеҫӗ йӗрет: ман пуҫлӑх кашни кун тенӗ пекех мана ӑшӑма кӑнтӑрла иртсен ик-виҫ сехетсӗр пыраймасҫ, пырсан та ал парса, ал ялсе ҫеҫ тухса кайаҫ, тет.

— Ун ҫине кама шалӑпӑ парас?

— Ма йӗретӗн тесе-и?

— Ҫук, кӑпинет ҫине мар, наҫалнӗк ҫине.

— Наҫалнӗк тени вӑл турӑ та, патша та... шӑп пул! Кирлӗ мара калаҫа ана ҫӗпӗтсе илеҫҫӗ.

## Ҫӗлхе пирки пуҫа килнӗ шухӑшсем.

Иеванкӗли ҫӗлхи калашле—пӳрократсене акмаҫҫӗ те, вырмаҫҫӗ те, вӗсем хӑйсемех шӑтса пыраҫҫӗ.

———

Нумай ҫӗлхе пӗлни лайӑх, ҫӗлхепе калаҫни кирек-хӑҫан та лайӑхах пулса пыраймасҫ.

———

Пуҫлӑхсем пӗр-пӗринпе харкашнӑ ҫухне ҫӗлхӳна кӑсӳна ҫиксе усра, тенӗ.

———

Йумӑҫ ҫӗлхине пӗлекенсем ҫӑваш ҫӗлхипе илемлӗ проиҫветенисем ҫыракансенҫен лайӑхрах пурӑнаҫҫӗ.

———

Есӗ пирӗн хӑш-хӑш поетсемпе литтераттӑрсен ҫӗлхисене тӗпӗ-йӗрипех ӑнланса пӗтерес тетӗн пулсассӑн, йумӑҫа кай. Иумӑҫ та ӑнлантарса парайmасан ҫыраканнипе калаҫса пӑх.

———

Пирӗн шухӑшпа сӑвӑсенҫн рифмӑсемпе ритмӑсене пӗтерсе хумалла: вӗсем пиркийех пирӗн сӑвӑҫӑсем хӑйсен ҫӗлхисене мукатса йараҫҫӗ.

———

Йӑтӑ та амӗш ҫӗлхине манмасҫ, хулара пурнакан ҫӑвашсем мансах пыраҫҫӗ.

———

Вырӑссем ҫӗлхе тӑрӑх Кейӗва ҫитме пултараҫҫӗ, ҫӑвашсем Шупашкарта та ҫӳреймеҫҫӗ.

———

Хуликансем ҫеҫ амӗш ҫӗлхисӗр пурӑнаймаҫҫӗ (материшҫинӑ).

———

Ҫӗлхесӗр ҫынсем сутра нумай пулакан.

———

Авалхи ҫынсем: ӳт ҫӗлхенӗн шӑмми ҫук, тенӗ. Вӑл тӗрӗс мар: шефсен ҫӗлхинҫе хӑш ҫухне шӑмӑ та пулаҫ.

———

Авалхи ҫынсем: ҫӗлхере пыл, тенӗ. Хаҫхи ҫынсен ҫӗлхи ҫинҫе тикӗт те пулкалаҫ.

———

Ҫӗлхипе каҫҫа илет, ҫӗрипе алимент та тӳлӗмест.

И—н М—н.

# ПӲРОКРАТ.



— Пăх-ха, ҫын шыва путаҫ вĕҫ!
— Куратăп та ха, анҫах камне нииепле те палласа илеймерĕм.
— Ма паллашшăнха есĕ ăна?
— Вăт ухмах—милитсисене хут ҫырҫа пĕлгерме, килсе ҫăлҫҫăр.

## Сывă пултăр тилкепе.

Кунĕн ҫĕрĕн ыйăх ҫывăрмастăп—
Телефон шăнкăртатасса кĕтетĕп,
Телефонпа лаша ыйтасран хăратăп
Кунне 11-12 кӳлсе тăварма ӳркенетĕп.
Телефон шăнкăртатсан итлетĕп,
Потай лошаҫ, тесен: ҫиҫҫас тетĕп,
Ҫиме ларнă апата та ҫиместĕп
Вара ҫасрах тухса лашана кӳлетĕп.
Кӳлсессĕн тилкепене йаваласа тытап,
Асли патне арҫури пек вĕҫтеретĕп,
Вара ăна виҫ кил урлă турттаратăп—
Хăш ҫух арăмне, аҫисене те тиетĕп.
Аслисене суса пĕтерейместĕп:
Вĕсем нумай турттарса та пĕтереймес,
Ку ҫеҫ мар-ха: аслисемпе тĕртленетĕп,
Хваттерсене пиҫкепе шыв турттарап.

**Иленкей.**

## Сан пекех.

**Упăшки**: Епĕ комантировккăра ҫӳренĕ ҫухне есĕ тӳрĕ пурăнтăни, мана улталамарăни?

**Майри:** Мĕн кирлĕ мара калаҫатăн! Паллах ĕнтĕ: ху мĕнле пурăнтăн, епĕ те ҫавăн пекех пурăннă.

**Упăшки**: Хам пекех тетĕн? (хăйне хăй). Хм!.. апла пулсан ĕҫсем питех мар.

## 2×2=6.

— Хăҫан икке икĕ хут илсен пилĕк пулаҫ.

— Пуҫлăх каласан. Вăл хушсан ик хут иккĕрен, пилĕк мар, ултă та туса хурăн.

# ХУЙХА.

— Есĕ, сутйе шăллăм, кутăн-пуçăн ан калаç-ха!... Каларăм: килĕшместĕп, тесе... урăх сăмах та çук.

— Карӡăк, е, карӡăк! рете кĕр ĕнтĕ!... Ну, çапрăм... Кăвакартрăм... Хаӡӡӡен, вăтăр пилĕк çул пĕрле пурăнса та çапма мар, сивĕ сăмах каламан еп сана... Каçар ĕнтĕ!

— Çук, старик! Кăвакартса пĕтерниие каçарăп та, шăла çапса хуçнине —çук, çук, çук... Кăвакарни, вăл ӡас тӳрленмесен те кĕпе-йĕм айĕнӡе курăнмасӑ, шăл—çавар уçсанах курăнаӑ...

— Апла пулсан, ылтăн шăл ларттарса парăп... Мана тĕрмене хуптарса мĕн усси пулаӑ-ха сана?... Ех, карӡăк!.. Аӡасем пурри̇не аса ил...

— Вĕрен пăртак... Çавăнпа та саккун. Ăна аслă çынсем, сак мунӡали тума çырман пуӡ... Есĕ те, сутйе, саккунран пăрăнасшăн... Транкки Трахвин арăмĕ Тарйе, те—кăвакартса пĕтернисене каçараӑ, шăлне çапса хуçнăшăн каçармасӑ, тĕрмене лартма йытаӑ, тесе, çырса хур!

— Шалт аптрамалла ĕнтĕ сирĕнпе... иксĕре те шалккă...

— Мĕн шалкки пур унта? Сире, арçынсене, арăмăрсене хĕненĕ ӡухне пĕртте шалккă мар, хаӡ тата—«шалккă», тесе ларатăн... Е-ей, кĕсмен!...

— Есĕ, Транкки Тарийи, сута килнĕ... Сута хисеплесе калаçас пулаӑ...

— Есĕ, тата арманта ларатăн-им? Пайан, хаӡ те, ир куна каçӡенех авăртрăмăр... Урăх, мĕн супăӡтетсе лармалли пур унта?...

— Апла пулсан, сут канашлама кайаӑ, терĕ сутйе.

* * *

Раççей Фетератсийĕн Сотсиалистăмпа Совет Респуплĕкĕн йаӡĕпе. 1927-мĕш çулта, май уйăхĕн 15-мĕшĕнӡе № уӡаскинӡи халăх суӡĕ Транкки Трахвинĕн айăплă ĕçĕсене пăхса тухнă хыççăн çаксене тупрĕ:

Транкки Трахвинĕ, арçын, 57-ре, суха пуçпе суха тăваӑ йăвăç çӳрепе çӳрелет, авланнă, арăмĕ те пур, арăмĕ—Тарйе йатлă, 10-12 аӡи пур, иртнĕ апрелĕн 22-мĕшĕнӡе хăйĕн кӳрĕшĕ Сикки Симунĕ патне, ирхине Мăнкун сăри сĕрнĕ çĕре кайса, мĕн каç пулиӡӡенех ларнă. Транкки Трахвин Сикки Симунĕ патĕнӡен таврăнсан, ăна арăмĕ—Тарйе: ей, намăссăр, кĕççе пит муркка йытти, ват супнă, тата тем те пĕр каласа йатланă. Сакки çинӡе çăпаталлă калăп выртнă. Транкки Трахвинĕ арăмне çиленнипе пĕç хушшине хупсах калăппа ватнă: нумай çĕртен кăвакартнă, пĕр шăлне çапса хуçнă. Ку ĕçре Транкки Трахвинĕ айăплă, тесе ăна 2 çула тĕрмене хупмалла, анӡах вăл хресӡен, тĕттĕм çын, тата арăмне мĕн пурĕ те пĕрре çеç хĕненĕ тесе, 1 çулне лармалла мар...

* * *

— Вăӑ, сана арăм, вăӑ, сана суӑ!.. мĕн тăвас ĕнтĕ хаӡ, лармаллах пулати-ха? Вăӑ, арăм...е!

— Старик, ан пăшăрхан ĕнтĕ!.. Пĕр çуллăха мулкаӡ тирĕ те ӡăтнă, теççĕ.

Трахвин арăмĕ çине пăхаӑ те:

— Мĕнле, Таруç...еси, есĕ мари? Хăçантан вара есĕ çапла пулса кайрăн?

— Ун çинӡен арçынăн нумайтарах пĕлмелле... Акă, ларса çырткала-ха! Ирхине кукăӡсем, улма пӳремеӡĕсем туса парса йарăп... Тĕрме апаӡĕ, мĕн калас... пит тутлах мар пуӡ ĕнтĕ.

— Ех, вĕри çĕлен, шуйттан, кĕрт йытти!.. Апла мăшкăлатăни тата, ӡурт!..

— Ан кăшкăр, Трашук! Кун пек сăмахшăн татах сут кĕтет сана, асту!..

Трахвин:—ку, ман карӡăк урăх çынна йурата пуçламани? Анӡах, шăлсăрскере кам йураттăр-ха, тесе шухăшлаӑ. Çĕрĕпех çавăн çинӡен шухăшласа выртрĕ.

— Трашук, есĕ тĕрмерен çыру йаркала... Кам та пулин çырса парĕ... Курас та, калаçас та килĕ... пĕр пĕлмесĕр пурăнма йăвăр пулаӑ мана та...

— Мĕнле-ха Тарук, Çаплах пулӡи ĕнтĕ?.. Йепле пурăнăн? Аӡасем... ӳххӳ-хӳ-хӳ..!—тесе макăрса йаӡĕ Трахвин.

— Мĕн тăвас тетĕн... саккун... ӡăт ĕнтĕ... ӳх-хӳ хӳ-ӳ-ӳ..!—тет арăмĕ.

— Сикку сăрине сĕрме кайман пулсан... ӳ-ӳ-ӳ-ӳ!..

— Шăла çапса хуçман пулсан... ӳ-ӳ-ӳ..!—тет карӡăкĕ.

ЕТМЕН.

## Отпускшӑн.



— Суха тума тесе пӗр ернелӗх отпуска кайас терӗм те, йамарӗҫ.

— Тӗрмене ларма кайас пулатӑха. Унта ҫулсерен 3 уйӑхлӑх отпуск параҫҫӗ.

## Тӗттӗм ӗҫсем.

— Тӗттӗм ӗҫсем тесе мӗнле ӗҫсене калаҫҫӗ.

— Ваккатсем шуратма йуратакан ӗҫсене тӗттӗм ӗҫсем, теҫҫӗ.

## Кахал ҫын.

— Мӗншӗн есӗ халиҫҫен авланман?

— Хам кахал (найан) пирки.

— Мӗнле апла?

— Арӑмпа вӑрҫма ӳркенетӗп. Авлансан вӑрҫмаллах пулать.

## Паллӑ токкумӗнтсем.

### Вӑкӑр ҫӗлхипе ҫырнӑ хут.

Ҫак хута куҫлӑх тӑхӑнсах ӑнланма ҫӗнетпӗр.

**Слушапи:** „Заключение племенного Вака у гр. д. Урумовой Лошадкине бырваре Фроловой“.

**Постановили:** „О-во дер. Урумовой опстановили выдать норма для быка зи лугового угодий из под названием „Поп ҫаране“ а быку должны выдержать до зимы 1927 г. и если другие быки ходят над подравом хлеба то выдержат и взимат не менее одного рубля за один раз, а племенному быку не прекратить за выпуском за коровой“.

Ҫакӑ Хӗрлӗ-Ҫутай вулӑсӗнҫи, Кив-Ирҫемес йалӗнҫи йалсовет ҫекретарӗ Матвейӗв ҫырнӑ проттокол. Ҫаваш хушшинҫи хутсене ҫӑвашла ҫырса пыни пулать ку, йе, тепӗр майлӑ каласан, ӗне ҫине йӗнерҫӗк хуни пулать. Ҫаваш ҫӗлхине йӗнерҫӗк тӑхӑнтартакан Матвейӗв й., сана кунтӑн асла хурса хисепleме тӗрӗс тивӗҫлӗ!

### Кала, милитси: Хӑҫанҫурапа ҫулӗ пулать?

Ак тепӗр хут. Хуҫӗн сылтӑм йенҫе 30 сӑмахлӑ штамп (№ 362).

**В Отдел Милиции НКВД ЧАССР.**

Прошу сообщить когда востановятся летние дороги после весенней распутицы, т. к. эти сведения нужны роте для определения возможности и времени возобновления службы по конвоированию.

Вркомроты №—Военком Семенов.

Вр. Делопроизводитель Лавров.

Ку ротнӑй комантирӑн: санӑн хырӑму хӑҫан апат ҫимеллӗх выҫӗ тесе ыйтсан, вӑл нийепле те тӳрех ответ параймасть. Ҫар уставне вӗренсе ҫитнӗ комантирӑн ун пек ыйтнисемпе Шупашкарти Комун шкулӗнҫе вӗренекен 10 ҫулхи аҫасем патне отношени йамалла пулнӑ. Хӑҫан ҫул пӑсӑлассине те, хӑҫан йусанассине те вӗсем ӗнтӗ пӗлеҫҫӗ.

## Ваттисен сăмахĕсене çĕнетни.

— Халăх çăварĕ—хапха çăвар, тем те калаçать, пĕртте ӳркенмест теççĕ. Кăнтселерте ларакан халăхăн çăварĕ, кăнтселерте ҫух, хупă çăвар. Тем каласан та ҫĕнмест, калаçмасть.

— Тухман çын тухсан, тăман тухнă—теççĕ. Кăнтселерсенҫи волоккитҫĕксем волокиттă пур пирĕн тесен, хĕвел тепĕр йенҫен çавăрăнса тухĕ теме йурать.

— Ĕмĕр сакки сарлака—кăнтселерти ĕçлĕ хутăн çулĕ вăрăм.

— Ватта курсан вать пул, çамрăкпала çамрăк пул, теççĕ. Халĕ пӳрократа курсан пӳрократ ан пул, волоккитта курсан пĕтерме тăрăш теме те йурать.

— Пĕр кунлăха кайнă ҫух, çиҫĕ кунлăх çăкăр хатĕрле теççĕ, уҫрештенийе пĕр сехетре пĕтес ĕçшĕн кайнă ҫух, çиҫĕ уйăха иртерме тӳсĕмлĕхе хатĕрле теме йурать.

— Ҫакак пӳрт тăрне ларса ҫриклетсен кил хуçи çулталăкҫен вилет, теççĕ, кăнтселерти пуçлăх кăшкăраша пуçласан волокиттă пĕтессе типĕпĕр.

— Умран кушак каçса кайсан, ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитеймест, теççĕ. Пӳрократ патне ĕçпе пырсассăн, куçĕпе çамка урлă çавăрса пăхсассăн, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳ таталнине сис теме аван.

— Ҫĕкеç илĕшсен, пуйасса теççĕ, каççир патне мешҫанккă илĕшсен халăх укçине салатасса.

— Ывăç тупанĕ кĕçĕтсен—укçа тупасса, каççира ревиçи тума пуçласан—тĕрмене лекессе.

— Ура тупанĕ кĕçĕтсен, ташласса, пӳрократ çине кăшкăркаласан алăк тĕлне лайăх пĕлтерессе.

— Тырра хĕвел тухăçнелле выраан, килес çул тырă аван пулать, хĕвел анăçнелле выраан—начар пулать теççĕ, пӳрократа кăшт çуласан волокиттă пулмасть, çуламасан волокиттă ĕмĕрĕ тăсăлать. ВАНҪА МĔТРИЙĔ.

---

### Хăравçă.

**Хĕрарăм:** Епĕ кĕçĕр тĕлĕнмелле тĕлĕк куртăм, есĕ мана каҫҫа илнĕ пек.

**Каҫҫă:** Ырра мар. Апла пулсан пирĕн пĕр-пĕринпе паллашма парахмалла пулать.

## Мешҫен арăмĕ.

— **Сан упăшку сана йуратать?**

— **О, пит йуратать.**

— **Ăçтан пĕлен йуратнине?**

— **Пĕлмесĕр: ни каçсерен уҫрештенире ĕçлемест, ни сопранисене çӳремест, ни командировккăсене каймасть.**

---

## Кармониленĕ хĕрарăм йурри.



Транкки Трахвивĕ арăмне çиленнипе пĕç хушшине хупсах калăппа ватнă.

(11-мĕш стр. пăх.)

# „Капкӑн“ такмакӗсем.

(Алфавит йӗркипе)

**А**тӑл шывпе кимӗ йухаҫ
Аҫтӑркана ҫитесшӗн,
Пуйан Микик шайккӑ пухаҫ
Йалсоветне кӗресшӗн.

**У**рампа еп иртнӗ ҫух
Иккӗ виҫҫӗ такӑнтӑм,
Пӗр поемӑ вуланӑ ҫух
Ҫӗр те виҫҫӗ такӑнтӑм.

**Ы**раш вырса пӗтерсессӗн
Ҫуртри вырма тухаҫҫӗ,
Пуху туса иртерсессӗн
Сулкаланса утаҫҫӗ.

**Ӑ**рат лаша кӑтра ҫилхе
Вӑрӑм ҫулта ывӑнмасҫ.
Арӑм майра ирпе килте,
Каҫпа куҫа курӑнмасҫ.

**Е**рех тени ӗрет тӑваҫ,
Ӗрет тухсан килелле...
Киле ҫитсен ҫышкӑ пыраҫ
Матка пуҫӗ йеннелле.

**Ӳ**сӗр ҫынӑн ик куҫӗ те
Пӗр куҫ тӗшне тӑраймасҫ.
Пирӗн йалӑн канашӗ те
Пӗр тӗшне тӑраймасҫ.

**И**ван пиҫҫен мӑн пӑрӑвӗ
Лут ӗнене ӗмет тет,
Пирӗн пупӑн аслӑ ывӑлӗ
Комсомола кӗрет тет.

**Ӗ**лӗк Микик пит куштанҫӗ
Мухтанаҫҫӗ мулӗпе,
Халӗ ӗнтӗ кӑшт лӑпланҫӗ
Ҫак самана йӑлипе.

**К**урак пулса ҫунат ҫапса
Кӑнтӑрлана веҫӗттӗм,
Асли пулса портвӗл ҫакса
Кӗр лашапа ҫӳрӗттӗм.

**Х**итре хӗрсем кӗнселерте
Машшинпала ӗҫлеҫҫӗ
Пырса кӗрсен кӑпинета
Иейкеленме пӗлеҫҫӗ.

**П**ирӗн ҫӑваш поеҫӗсем
Ҫӑваш ҫӗлхин тусӗсем,
Анҫах хӑшӗн ҫырӑвӗнҫе
Нумай вырӑс сӑмахсем.

**Т**уран хуллен ансассӑн та
Йалтти-йалтти сиктерет,
Асли «йулташ» пулсассӑн та,
Еп кам! тесе сиккелет.

**Ҫ**аппи-ҫаппи уткалаҫҫӗ
Копператтив хуҫисем,
Унта кунта сулӑнаҫҫӗ
Ҫӳпҫе хырӑм ӳсӗрсем.

**Ҫ**иҫи кӑсйа, ӑҫта кайан?
Кантӑр вӑрри вӑрлама.
— Селти инке ӑҫта ҫупан?
— Самокконне йухтарма.

**Ш**ӑпӑртатса ҫӑмӑр ҫаваҫ
Кӑнтӑрлана ҫарӑнӗ.
Пирӗн Петӗр хуликанлаҫ
Ӑҫта ҫитсе ҫапӑнӗ.

**С**амар хулин урамӗсем
Ытла хитре урамсем,
Шупашкарӑн пур ҫурҫӗсен
Арӑш-пирӗш нумӗрсем.

**Ҫ**умри арӑм ҫипер пулсан
Кӑмӑл ҫӳле ҫӗкленет,
Айаккӗнҫе тепре пулсан
Тарӑн кӑсйа шӗвелет.

**Л**апри хитре ҫеҫексем
Мӗн сулхӑнпе ӳснӗши?
Пирӗн лавккан таварӗсем
Ӑҫта кайса кӗнӗ-ши?

**Ҫ**ава хӗрне вӑрлаҫҫӗ
Самӑй ҫурҫӗр тӗлӗнҫе,
Халӗ ӗнтӗ ҫышкӑ выҫаҫ
Ҫак мӑшӑрсем хушшинҫе

**М**ӑнкун тени Шупашкарта
Ытла ҫаплӑ пулайаҫ:
Совет тенӗ хваттерсенҫе
Хаклӑ ерех йухайаҫ.

**Н**асар тени Насаркка тет,
Етем йаҫӗ тӗрли пур
Манӑн арӑм иккӗ виҫҫӗ
Пӗри прахсан тепри пур.

Нанине те, ҫанине, тет
Краҫук аппа аҫине,
Ир те кӗтет, каҫ та кӗтет
Алиментӑн укҫине.

**Р**уский тени вырӑс пулаҫ,
Вырӑс йаҫӗ ҫӑваш мар,
Ех, йулташсем, Шупашкартах
Майра кулли пулас мар.

**Й**ури тӑсрӑм йуррисене
Ҫӑваш йатне асӑнса
Йури тупрӑм такмаксене
«Капкӑн» йатне асӑнса.

# „Ҫӗнелнӗ ҫӗрпе“ хресҭен шухӑшӗ.

1925-мӗш ҫулта, апрелӗн 8-мӗшӗнҭе Шупашкарта „Ҫӗнелнӗ ҫӗр“ тусӗсен ушкӑнне орканисатсиленӗ. Анҭах вӑл хӑйӗн ӗҫне хаҭ те пуҫласа йаман.

1925-мӗш ҫул. Кранташ тытса арихметтӗклесе пӑхсан, икӗ ҫул кайалла пулнӑ мӗн ҫак телейлӗ ҫул. Ку ҫулта апрелӗн 8-мӗш кунӗ те пулнӑ. Апрелӗн 8-мӗшӗ виҫҫӗ те пулса иртрӗ... Йепле? Акӑ: 1925-мӗш ҫулта—пӗрре, 1926-мӗшӗнҭе—иккӗ, 1927-мӗшӗнҭе—виҫҫӗ... Ку йапала, ӗнтӗ, йулташсем, 1925-мӗш ҫул пулни виҫҫӗмӗш ҫул ҫине куснине кӑтартаҫ. Хула пиҭӗпе йал ҫине ҫаврӑнса пӑхни хӑҫан пулнӑ, тесе ыйтсан,—тӳрех: 1925-мӗш ҫулта пулнӑ тейӗр, мӗншӗн тесен, ку ҫул Шупашкарта „Ҫӗнелнӗ ҫӗр“ тухнӑ. „Ҫветтуйӑн ҫӗрмел ӳҭӗ пек ҫӗр ҫӗнелсе тухнӑ. Вӑт мыскара!.. Навус тӑкмасӑрах,—ҫӗнеленнӗ тӑнӑ, вӑ-ӑт!

Хресҭенсем хаҭ те: ҫӗр кивелсе ҫитрӗ, тырӑ пулми пулҭӗ; акрономсен илемлӗ, шӑнкӑртатса йухакан шыв пек, татти-сыпписӗр тухакан сӑмахӗсем те пӗр кӗреҫе тислӗк вырӑнне тӑмаҫҫӗ, теҫҫӗ.

Пирӗн, мушикӗн;—пӗлменни ҫав... Ку иккенне пӗлнӗ пулсан... е-ех!—килес Шупашкара, вӑрттӑн та пулсан, тултарас пӗр кӗсйе „Ҫӗнелнӗ ҫӗре“!.. Ана хамӑр кивелнӗ ҫӗр ҫине сапнӑ пулсан, тен пирӗн ҫӗр те ҫӗнелсе кайнӑ пулӗҭҭӗ?

Анҭах, пӗртте ӗненессӗм килмест:—„Ҫӗнелнӗ ҫӗр“ киввинҭен те кивелсе кайнӑ, теҫҫӗ. Усал кӑна сиртӗр, апла пулсан ун пек ҫӗртен!

Калатӑп ҫав: хулара ҫӗр ҫук, тесе... Ҫынсем каланинҭен илтнӗ те-ха... унта тусанпа пылҭӑкран пуҫне ним те ҫук, теҫҫӗ... Ку йапаласем нихҫан та ҫӗнелме пултараймаҫҫӗ: тусан—ӗмӗрех тусан, пыҭҭӑк—вӑл, тӗнҭе пуҫланса кайиҭҭенех пулнӑ, теҫҫӗ...

Ахӑр самана килет, тенине ӗненме пӑрахнӑ пек, «ҫӗр ҫӗнелет», тенӗ сӑмаха та ӗненес килми пулҭӗ...

Сӑмахран калатӑп та-ха, пирӗн йал пулӑшкомне ӗҫлеме пӗлмест тесе, виҫтӑват хутҭен «Канаш» ҫине ҫырҭӗҫ... Ӗнтӗ, пирӗн пулӑшкомра Куҫукпа Васук кӑна ӗҫлеҫҫӗ те... Иккӗшӗ те ҫыру таврашне пӗлмеҫҫех ҫав ӗнтӗ... Ҫекреттарӗ—Паҭук... е-ей... мӗн каласан!.. Пирӗн, мушикӗн пуррипе ҫукки пӗр ҫӗрте ӗнтӗ.

«Ҫӗнелнӗ ҫӗр» ҫинҭенех калаҫас-ха. Хула пылҭӑклӑ пулсан та, ҫыннисен пуҫӗсем ҫутӑ. Хӑшин-пӗрин шалта... салтаксем: коҭӗолок, теҫҫӗ... ҫав коҭӗолокра пит ҫутах пулмасан, пуҫне хырса та пулсан ҫутатаҫҫӗ, мӗншӗн тесен, вӗсемшӗн унта „ҫӳҫ касакан парикмаххӗр“ Кослохсем темиҫе те пур... Йепле-ха, ҫав тери ҫутӑ ҫынсем „Ҫӗнелнӗ ҫӗре“ кивется лартма пултарнӑ-ши?

Малтан, апрелӗн 8-мӗшӗнҭе... виҫӗм ҫул пулаҫ ӗнтӗ те-ха вӑл.. «Ҫӗнелнӗ ҫӗр» ҫинҭен пит хӗрӳллӗ калаҫрӗҫ пулмалла:—Иулташсем!—терӗҫ пуҭ.—Пӗтӗм тӗнҭери аккулӑсем пирӗн ҫине хӗҫпӑшалпа тӑма шухӑшлама пӑрахнӑ вӑхӑтра канса тӑмалла мар, терӗҫ пуҭ. Анклире Ҭӗмпӗрлӗ, Керманире—Кин те пур, Итталире Мусаланни, Фратсире—Пӑванкарӗ кҫрӗ терӗҫ пуҭ.—вӗсем пурте хӑвахшыҫсем, терӗҫ пуҭ.—«Ҫӗнелнӗ ҫӗр» сывӑ пултӑр, ур-ра-а!—терӗҫ пуҭ.

Кун пек ҭаплӑ кун ахалех иртмест вӑл хулара: мӗнле те пулсан камит кӑтартрӗҫ пуҭ театтӑрта. Камит хыҫҫӑн сӗлекисем йуха пуҫлаҭҭен ташларӗҫ пуҭ, ташланӑ хыҫҫӑн—ҫӑварсем типрӗҫ пуҭ, ҫӑварӗсене йӗпетме «Таваӣ кӗретӗп»-е кӗрсе кайрӗҫ пуҭ... ну... «Ҫӗнелнӗ ҫӗр» ҫинҭен манса каймa тата вӑхӑт... Пошшол ты к ҭортту «Ҫӗнелнӗ ҫӗрӳпе», терӗҫ пуҭ кайран. Выҭаттар кӑрмахвуна, Уххӑр купсана йурлаттар! Сывӑ пултӑр кӑрмахвун, ур-ра-а!—терӗҫ пуҭ.

Вӑт сана—«Ҫӗнелнӗ ҫӗр!» «Йалт пӑхрӗ те, йалт кӗҭӗ», теҫҫӗ пӗлетлӗ кунхи хӗвеле, ҫавӑн пекех ӗнтӗ ку.

ЕТМИН.

---

«**Ф**» саспалли—ҭӑваш палли
Фетӑр теме йураҫши?
Сала совеҭ пуйан майли
«Капкӑн» ӑна кураҫ-ши?

«**О**» саспаллин мӑн ункине
Тӳрӗ ҫырма йурамасҫ.
Уҭрештенин пуҫлӑхсене
Хирӗҫтерме йурамасҫ.

Н ЕВТОККИМӐВ.

# Пирĕн ответлă çынсен майрисем...

**(Хĕрарăм телекаткисем курса çӳренинђен).**



Тăлăх туратсене вађђи пуçтарма... Тротски урамĕнђн 7-мĕш çурта пырса кĕтĕмĕр...





— Епĕр тăлăх туратсене çуратмастпăр...хăвăрах пулăшăр,—терĕ пĕр кăтра çӳçлĕскер, алăкне питĕрсе.



— М-м-м...—турĕ те, краваť çине кайса выртрĕ кӳршĕри шысмак майра епĕр кĕрсенех.



Урама тухсанах, ђӳређерен çакна куртăмăр...



Çавсемех кашни кун çак ĕçре...ђăваштавраш вăл çурт çуммипе ан ирт те...



Мăнкунта сĕтелсем... тăлăхра ларман çав.

Ответ. редактор **А. Золотов**.

Чувашлит № 1761 Чебоксары, тип. „Чувашская книга“.